27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
МАРТ
18
ВЫРСАРНИКУН
52(6803) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Колхозсен машинисемпе инвентарӗсем ӗҫе хатӗр пулмалла

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ялхуҫалӑхне аталантармалли 1945 ҫулхи план ҫинчен хӑйсем йышӑннӑ постановленипе ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе колхозсем умӗнче тӑракан задачӑсене тӗплӗн кӑтартса пачӗҫ.

Лашапа ӗҫлемелли машинӑсене, транспорт инвентарӗсемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене вӑхӑтра юсасси—пур колхозсемшӗн те паян тумалли паха ӗҫ пулса тӑрать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ялхуҫалӑхӗнче лаша вӑйӗпе ӗҫлемелли ӗҫсен шучӗ нумай пысӑкланчӗ. Ҫавӑнпа та кашни колхозӑн лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсене, ялхуҫалӑх тата транспорт инвентарӗсене, ут таврашӗсене ҫителӗклӗ тата лайӑх юсаса хатӗрлемелле.

Анчах та халӗ районсемпе колхозсен руководителӗсем чылайӗшӗ ҫак ыйту ҫине кирлӗ пек ҫаврӑнса пӑхмаҫҫӗ-ха. Лашапа ӗҫлемелли машинӑсене транспорт инвентарьне чылай колхозсенче йӗркеллӗ пӑхса усрамаҫҫӗ, вӗсене вӑхӑтра юсамаҫҫӗ, ҫураки ӗҫӗсем валли хатӗрлемеҫҫӗ. Вӗсемшӗн никам та ответ тытмасть, вӗсем ҫӗмӗрӗлсе пӗтеҫҫӗ, вӗсене пайӑн-пайӑн салатса пӗтереҫҫӗ.

Лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсене тата транспорт инвентарьне, ытти тӗрлӗ ӗҫ хатӗрӗсемпе ут таврашӗсене юсаса ҫуракине хатӗрлесси республикӑри чылай колхозсенче ҫителӗксӗр пулса пырать. Советски, Шупашкар, Шӑхасан, Хӗрлӗ Чутай, Йӗпреҫ, Элӗк тата ытти хӑшпӗр районсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те юсамалли мӗнпур плугсенчен ҫуррине ытларах кӑна юсаса ҫитернӗ. Сеялкӑсене юсас енӗпе Канаш, Первомайски, Советски, Шӑхасан, Тӑвай тата ытти районсем юлса пыраҫҫӗ.

Плугсене, сеялкӑсене, урапасемпе ут таврашӗсене юсас ӗҫе пӗр сӑлтавсӑрах тӑсса пыракан колхозсем сахал мар. Сӗнтӗр районӗнчи «Аврора», «Родина», «Наука» колхозсене илер. «Наука» колхозра сеялкӑсене юсаман, плугсемпе сӳре туртисене хатӗрлемен, урапасем, хӑмӑтсем, ҫураки вӑхӑтӗнче кирлӗ пулакан вӗрен-пӑявсем, михӗ-шӑналӑксем, плугсемпе машинӑсем тата урапасене сӗрмелли тикӗт ҫителӗксӗр. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «День урожая», «Красный маяк», «Крестьянин», Калинин тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенче те лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсемпе ут таврашӗсем хатӗр мар. «Крестьянин» колхозра сеялкӑсемпе транспорт инвентарӗсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те юр айӗнчех лараҫҫӗ. «День урожая» колхозра урапасене юсама тытӑнман. Ҫав вӑхӑтрах ку колхозра урапа-ҫуна тӑвакан мастерской ӗҫлет.

Советски районра та уйрӑм колхозсенче машинӑсемпе плугсене, уйрӑмӑнах ут таврашсене юсас тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ. «Трудись» колхозра хӑмӑтсем, ӗнерчӗксем вилеллӗ мар тата ҫителӗксӗр, вӗсем унта-кунта сапаланса выртаҫҫӗ. Ӗҫе кайнӑ чухне колхозниксем мӗнле хӑмӑт е ӗнерчӗк тупаҫҫӗ, ҫавӑнпа усӑ кураҫҫӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ «Трудись» колхозра суранланнипе 38 лашаран 25 лаша стройран тухнӑ.

Малта пыракан колхозсем лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсемпе плугсене кӑна мар, транспорт инвентарӗпе ут таврашсене те хатӗрлесе ҫитернӗ. Етӗрне районӗнчи Ленин, Молотов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсем урапасене, хӑмӑтсемпе вӗренпӑявсене пӗтӗмпех юсаса хунӑ. Калинино районӗнчи «Алмаз» колхозра та лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсене, плугсене, урапасемпе ытти ӗҫ хатӗрӗсене, ут таврашӗсене юсаса лартнӑ. Ҫураки вӑхӑтӗнче кӑна мар, ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫлениччен ӗҫлемеллӗхех маҫ тата тикӗт хатӗрлесе хунӑ.

Кӑҫал ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче кӳлсе ӗҫлеме вӗрентнӗ майракаллӑ шултӑра выльӑхсемпе анлӑн усӑ курма тивет. Районсенчен илнӗ сведенисем тӑрӑх, республикӑра паянхи кун тӗлне 6100 вӑкӑра ытла ӗҫе вӗрентнӗ. Анчах та вӗсене кӳлсе ҫӳремелли хатӗрсем ытла та ҫителӗксӗр. Кӳлсе ӗҫлеме вӗрентнӗ вӑкӑрсемпе ҫураки вӑхӑтӗнче тата ытти ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче туллин усӑ курас тесен, кӳлме кирлӗ хӑмӑтсемпе ытти хатӗрсене ҫителӗклӗ хатӗрлемелле.

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ кӑларнӑ приказ тӑрӑх, пирӗн республикӑри колхозсен лашапа ӗҫлемелли ялхуҫалӑх машинисемпе транспорт инвентарьне тата ытти ӗҫ хатӗрӗсене апрелӗн 20-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитермелле. Чи малтан, вӗсене пӗтӗмпех шута илес пулать, юсаса хатӗрлес пулать. Юсанӑ хыҫҫӑн лайӑх упраса усрамалла, ҫӗмӗрсе пӗтересрен ҫирӗп сыхламалла.

Ялхуҫалӑх артель уставӗн 14-мӗш статьи каланӑ тӑрӑх, кашни колхозрах уйхир бригадисене вӗсене ялхуҫалӑх ӗҫӗнче кирлӗ пулакан мӗнпур машинӑсене, турттӑм вӑйӗпе транспорт инвентарӗсене тата ытти ӗҫ хатӗрӗсене ятарласа ҫырнӑ акт тӑрӑх ҫирӗплетсе памалла. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах колхозсем ҫакӑн пек йӗрке тумалла: уйхир бригадин членне машинӑсемпе ялхуҫалӑх тата транспорт инвентарӗсене те акт тӑрӑх памалла. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн вӗсене бригадирӑн колхозниксенчен каллех акт тӑрӑх йышӑнмалла. Машинӑсемпе тӗрлӗ инвентаре хуҫасӑрла тыткаласа ҫӗмӗрсе е пӑсса пӗтернишӗн айӑплисене ответ тыттармалла. Ҫакӑн пек тусан кӑна машинӑсемпе, транспорт тата ялхуҫалӑх инвентарӗсемпе усӑ курас ӗҫре йӗрке пулма пултарать.

Халӗ кашни колхозра лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсемпе транспорт инвентарӗсене юсаса хатӗрлес тӗлӗшпе пӗтӗм вӑйя хурса ӗҫлемелле. Ҫак ӗҫре колхоз тимӗрҫисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Кунта ӗҫ ӑнӑҫлӑхӗ пӗтӗмпех колхоз руководителӗсем тимӗрҫӗсен ӗҫне кирлӗ пек организацилеме пӗлнинчен килет. Уйрӑм колхозсенче лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсене, ялхуҫалӑх тата транспорт инвентарӗсене юсасси тимӗрҫӗсем ҫуккипе е ҫителӗксӗррипе чарӑнса тӑрать. Ҫакна шута илсе, Ишлей районӗнче тимӗрҫӗ ҫук колхозсене тимӗрҫӗ пур ҫывӑхри колхозсем ҫумне ҫирӗплетнӗ. Калинин ячӗпе тӑракан колхозри тимӗрҫӗ «Серп и молот», Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсен машинисемпе инвентарӗсене юсаса парать. Тимӗркасси колхозӗ ҫумне «Родина», «Депутат», «Пархикасси» колхозӗсене ҫирӗплетнӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Емӗт» колхоз тимӗрҫи Красильников юлташ кӳршӗри ик-виҫӗ колхоз валли ӗҫлет. Анчах та тимӗрҫӗсен ӗҫне те колхоз руководителӗсен контроллесе тӑмалла. Пахалӑхсӑр юсанӑ машинӑсене йышӑнмалла мар, тепӗр хут юсама памалла. Тимӗрҫӗсене ӗҫ пахалӑхне тата хӑвӑртлӑхне кура тӳлемелле.

Лаша кӳлсе ӗҫлемелли машинӑсене тата транспорт инвентарӗсене, ут таврашӗсемпе ытти ӗҫхатӗрӗсене мӗнле юсанине ятарласа тунӑ комиссисем тӗрӗслесе йышӑнмалла. Комисси составӗнче колхоз председателӗ, машинӑсемпе ӗҫ хатӗрӗсене ҫирӗплетсе панӑ бригадӑн бригадирӗ тата районри ҫӗрӗҫ пайӗн представителӗ пулмалла. Машинӑсемпе ӗҫ хатӗрӗсене тата транспорт инвентарьне йышӑнни ҫинчен акт ҫырмалла.

Март—ҫурхи уйӑх. Ҫуракине тухиччен вӑхӑт уйӑх ҫурӑран та каярах юлчӗ. Халӗ кашни кунах шутра пулмалла, кашни кунпа ҫуракине хатӗрленес ӗҫре туллин те тӗрӗс усӑ курмалла. Ҫуракине пур енчен те лайӑх хатӗрленсен кӑна вӑйлӑ тырпул никӗсне хывса хӑварма пулать.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕНЧЕ

ЕТӖРНЕ. Районри малта пыракан колхозсем, кӑҫалхи вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӗве анлӑн хутшӑнса, ҫуракине хатӗрленсе ҫитеҫҫӗ. Ҫӗнӗ Етӗрнери «Комсомол» колхоз (председателӗ М. Краснов) ялхуҫалӑх машинисене, кӳлмелли хатӗрсене кирлӗ чухлӗ юсаса хунӑ. Вӑрлӑхсене сортласа тасатнӑ, кладовщик аллине актпа панӑ. Ҫӗре ҫемҫетме кирлӗ вырӑнти удобренисене те ҫине тӑрсах пухаҫҫӗ.

Палтайри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз вӑрҫӑччен районра кая юлса пыракан колхоз пулнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ку колхоз членӗсем хӑйсен ӗҫне тӗпренех ҫӗнетсе ӳрӑхлатрӗҫ. Иртнӗ ҫулхи ҫуракине тивӗҫлипе хатӗрленни вӗсене вӑйлӑ тырпул туса илме май пачӗ. Колхозниксем кашни ӗҫкунӗ пуҫне 3,8-шер килограмм тӗштырӑ валеҫрӗҫ. Вӗсен ӗмӗчӗ—кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен те вӑйлӑрах тырпул туса илесси. Хӑйсен ӗмӗтне пурнӑҫлассишӗн вӗсем канма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Вырӑнти удобренисене пухса хире кӑлармалли плана вӗсем ытлашшипех тултарчӗҫ. Анчах вӗсем плана тултарнипе лӑпланса лармаҫҫӗ. Ку енӗпе малалла ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз ялхуҫалӑх машинисене юсаса лартнӑ, кӳлмелли хатӗрсене юсас тата ҫӗнӗрен тӑвас ӗҫ те пысӑк хӑвӑртлӑхла пулса пырать. Вӑрлӑхсене сортласа кладовщик аллине актпа панӑ, вӗсен шӑтас пахалӑхне тӗрӗсленӗ.

Ҫавӑн пекех Вӑрманкас Етӗрнери «Дружба» колхоз та (председателӗ Рыбаков) ҫуракине тимлӗн хатӗрленет. Вӑрлӑхсене сортласа амбарсене хывнӑ, вӗсен шӑтас пахалӑхӗ аван. Плугсемпе сӳресене ҫителӗклӗ хатӗрлесе, юсаса хунӑ. Ку колхоз членӗсем хӗллехи агротехника мероприятийӗсене тӗплӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Паянхи куна уя 3 пин лава яхӑн тислӗк кӑларнӑ, 60 центнер кӗл, 35 центнер кайӑк-кешӗк тислӗкӗ пухнӑ. Колхозӑн ҫуракинче лашасене кӳлмелли хатӗрсем ҫителӗклӗ. Ҫак ӗҫсене вӑхӑтра туса ҫитерме вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнни нумай пулӑшрӗ. Ку колхозри бригадӑсем тата звеносем пӗр-пӗрипе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксен агротехникӑллӑ пӗлӳне ӳстерес шутпа колхозра агрокружок организациленӗ. Кружока сухаҫӑсемпе акакансем ытларах ҫӳреҫҫӗ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхозра та кӑҫалхи вӑйлӑ тырпулшӑн анлӑ кӗрешӳ пуҫарса янӑ. Ҫуракине кӑтартуллӑ хатӗрленес тӗлӗшпе колхозри П. Алмазов юлташӑн иккӗмӗш бригади малта пырать. Ку бригада ҫуракине хатӗрленсе ҫитрӗ ӗнтӗ. Вӑрлӑхсене сортласа амбарсене хывнӑ, вӗсен шӑтас пахалӑхне тӗрӗсленӗ. Плугсемпе сӳресене, кӳлмелли хатӗрсене ҫителӗклӗ юсаса хатӗрленӗ.

Ҫак асӑннӑ колхозсем ҫуракине пӗр ӗмӗтпе—кӑҫал гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илес ӗмӗтпе хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем ҫавна пурнӑҫа кӗртессе шанаҫҫӗ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана срокра тултарар

Кӗркуннепе хӗллехи вӑрман хатӗрлевӗн хӗрӳллӗ тапхӑрӗ вӗҫленсе пырать. Анчах Чӑваш АССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсенчен нихӑшӗ те хӑйӗн сезонри планне тултарман-ха. Долгополянӑри вӑрман завочӗ, Алтышево, Вӑрнар тата Буинск вӑрманпромхозӗсем плана тултарса ҫитереҫҫӗ, ыттисем вара чылаях юлса пыраҫҫӗ.

Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсем йывӑҫ материалсем хатӗрлесе парас енӗпе те ҫӗршыв умӗнче пысӑк парӑма кӗчӗҫ. Авиаципе кӑмрӑк промышленноҫӗсем валли, хӗҫпӑшал тӑвакан промышленность предприятийӗсем валли йывӑҫ материалсем тата чугун ҫул транспорчӗ валли вутӑ турттармалли плана тултарман.

Кӗркуннепе хӗллехи вӑрман хатӗрлевӗн планне тултарас ӗҫре предприятисем ҫакӑн пек юлса пыни вӗсем хӑйсен аллинчи майсемпе ҫителӗксӗр усӑ курнинчен, ӗҫе япӑх йӗркеленинчен килет. Ҫавӑн пирки вӑрманта ӗҫлекенсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те начар.

Харпӑрхӑй аллинчи майсемпе уйрӑмах Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнче (директорӗ Федоров, технорукӗ Цветков) начар усӑ кураҫҫӗ. Ҫак кварталта вӑрман турттармалли плана мартӑн 10-мӗшӗ тӗлне: вӑрманпромхоз обозӗ—55,8 процент, Чернореченски автомобиль ҫулӗ—15,4 процент кӑна тултарнӑ. Ҫак вӑрманпромхозӑн кадрта тӑракан рабочийӗсем вӑрман хатӗрлемелли кварталти плана 62,4 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Предприятисем ҫавӑн пекех рационализациленӗ ҫулсемпе ытла та начар усӑ кураҫҫӗ. Вӑрман турттармалли плана Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вӑрман пункчӗн рационализациленӗ ҫулӗ—18,9 процент, Буинск вӑрманпромхозӗн пӑрлантарнӑ ҫулӗ—37,7 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Хӑшпӗр предприятисен технорукӗсем, инженерӗсемпе техникӗсем, вӑрман пункчӗсен начальникӗсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе начар туса пыраҫҫӗ, шалти ӗҫ майӗсемпе туллин усӑ курма пӗлмеҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлекен предприятисем ҫителӗксӗр ӗҫлени хӑшпӗр районсем ӗҫпе туртӑм вӑйне кирлӗ чухлӗ парса тӑманнинчен те килет. Октябрьски, Вӑрмар, Етӗрне, Шӑмӑршӑ тата ытти районсем вӑрман турттарас ӗҫе сӑлтавсӑрах тӑсса пыраҫҫӗ. Асӑннӑ районсен плана ӑнӑҫлӑн тултарма, малта пыракан районсенни пекех, условисем ҫителӗклӗ пулнӑ.

Лайӑх ӗҫлекен Шупашкар тата Кӳславкка районӗсем сезонри плана хатӗрлес енӗпе те, турттарас енӗпе те республикӑра чи малтан тултарчӗҫ. Тӑвай, Комсомольски, Сӗнтӗрвӑрри, Калинино, Красноармейски, Ҫӗмӗрле тата ытти районсем те плана пур енӗпе те тултарса ҫитереҫҫӗ. Вӗсем вӑрманта халӗ те хӑвӑртлӑхсене чакармасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем сезонри задание тултарасса кӑна мар, иртерсе тултарасса та шанма пулать.

Вӑрман хатӗрлевӗн сезонри планне кашни предприяти, кашни районӑн тата колхозӑн пӗтӗмӗшпе кӑна мар, пур ассортиментсем тӑрӑх та тултармалла. «Правда» хаҫат кӑтартса панӑ тӑрӑх, плана ӑнӑҫлӑн тултарма ҫак условисем кирлӗ: «пӗррemӗшӗнчен,—трестсем, колхозсем тата единоличниксем тытакан лашасене вӑрман турттарнӑ ҫӗре май пур таран йышлӑнрах хутшӑнтармалла; иккӗмӗшӗнчен, — рельссем хывса тунӑ ҫулсене, трактор, автомобиль ҫулӗсене пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлеттермелле; виҫҫӗмӗшӗнчен,—вӑрман хуҫалӑхӗнче пур пек тракторсемпе, паровозсемпе, мотовозсемпе тата автомашинӑсемпе туллин усӑ курмалла».

Колхозсенчен пынӑ ӗҫ вӑйне—ҫынсемпе лашасене—вӑрманта йышӑнса илни кӑна ҫителӗксӗр, вӗсене ӗҫе тӗрӗс вырнаҫтарса тухас пулать, ӗҫлеме юрӑхлӑ условисем туса памалла, ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗрмаях ӳстерсе пырассишӗн кӗрешмелле. Юлнӑ кӗске срокра плана тултарма пулӑшакан майсенчен пӗри вӑл—ӗҫ вӑхӑчӗпе туллин усӑ курни пулать. Вӑрман касакансемпе турттаракансен ирхи ҫутӑпа пуҫласа сӗм тӗттӗмчченех ӗҫлемелле, ӗҫ тухӑҫлӑхне 2—3 хут ӳстермелле.

Вӑрман касакансемпе турттаракансен ӗҫне Шӑмӑршӑ вӑрманпромхозӗн хӑшпӗр пункчӗсенчи пек «организацилени» пулмалла мар. Кунта рабочисем ӗҫе 9 сехетре кӑна тухаҫҫӗ. Ҫак вӑрман пунктӗнчи мастерсем кайра пыракансен шухӑш-кӑмӑлӗсемпе пурӑнаҫҫӗ. вӗсем вӑрман хатӗрлевӗ хӑй тӗлленех пулса пырасса шанаҫҫӗ. Йывӑҫсене кунта мӗнле май килнӗ ҫавӑн пек касса ӳкереҫҫӗ, шыв ҫулӗн ҫывӑхри склачӗсем патне тухмалли ҫулсене туса ҫитермен, лашасемпе ӗҫлекенсем валли кирлӗ условисем туса паман, мастерсем ӗҫе организацилесе, ертсе пыма курӑнмасть.

Вӑрман турттармалли плана тултарас ӗҫе халӗ, тӗпрен илсен, лаша татса парать. Предприяти руководителӗсен, лашасене лайӑх пӑхнипе пӗрлех, вӗсен ӗҫне май пур таран ҫӑмӑллатмалла. Ку тӗлӗшпе рационализациленӗ ҫулсемпе анлӑн усӑ курмалла, лашасемпе ҫывӑхрах вырӑнсенчен турттарса кӑлармалла, темиҫе лашапа пӗр харӑс турттарассине йӗркелемелле. Уйрӑмах ҫулсене типтерлӗ тытса, лайӑх пӑхса тӑмалла. Механизациленӗ тата рационализациленӗ ҫулсене икӗ сменӑпа —талӑкӗпех ӗҫлеттермелле. Ӗҫе йышпа мар, пултарулӑхпа тума вӗренмелле.

Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана срокра тата пур ассортиментсем тӑрӑх та тултармалла. Халӑх хуҫалӑхне топливӑпа вӑрман материалӗсем хатӗрлесе парасси вӑрҫӑпа хуҫалӑх тӗлӗшӗнчи пысӑк задача пулса тӑрать. Ҫак задачӑна татса парассине апрель уйӑхӗччен, ҫулсем пӑсӑлса каяччен, тӑсмалла мар; вӑрман турттармалли плана тултарас тесе, халӗ мӗнпур вӑйсемпе тата майсемпе туллин усӑ курса ӗҫлемелле.

А. ЗВЕРЕВ,
Чӑваш АССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссарӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене „Ача амӑшӗн мухтавӗ" ятлӑ орденпа „Ача амӑшӗсен медалӗ" ятлӑ медаль парса наградӑласси ҫинчен

СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, СССР Верховный Совет Президиумӗн ячӗпе ҫаксене наградӑлас:

ШУПАШКАР ХУЛИ ТӐРӐХ

Тӑхӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене
«АЧА АМӐШӖН МУХТАВӖ» ЯТЛА I-мӗш СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Мария Бонифатьевна Шишкинӑна — килхуҫи хӗрарӑмне.

Сакӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене
«АЧА АМӐШӖН МУХТАВӖ» ЯТЛА II-мӗш СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Анна Львовна Бронниковӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.
2. Екатерина Михайловна Ушаковӑна—килхуҫи хӗрарӑмне.

Ултӑ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене
«АЧА АМӐШӖСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА I-мӗш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Надежда Егоровна Алексеевӑна — «Социализм» колхозри колхозницӑна.
2. Елизавета Семеновна Урочаевӑна — килхуҫи хӗрарӑмне.

Пилӗк ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене
«АЧА АМӐШӖСЕН МЕДАЛӖ» ЯТЛА II-мӗш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Елизавета Константиновна Константиновӑна — килхуҫи хӗрарӑмне.
2. Елизавета Герасимовна Мурашевӑна —«Социализм» колхозри колхозницӑна.
3. Анна Герасимовна Погодинӑна — «Социализм» колхозри колхозницӑна.
4. Мария Васильевна Патраковӑна — килхуҫи хӗрарӑмне.
5. Пелагея Емельяновна Шитовӑна — килхуҫи хӗрарӑмне.
6. Евдокия Ивановна Яковлевӑна — «Социализм» колхозри колхозницӑна.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 ҫулхи февралӗн 27-мӗшӗ.

КРАМАТОРСК ЗАВОДӖНЧЕ ЧУГУН ШӐРАТАКАН ЦЕХ ӖҪЛЕМЕ ПУҪЛАНӐ

Краматорскри машинӑсем тӑвакан завода юсаса хута яраҫҫӗ. Унӑн чугун шӑратакан цехне хута янӑ ӗнтӗ. Ҫав цехра тӗрлӗ ӗҫсене йӑлтах механизациленӗ. Пӗтӗм оборудовани тата механизмсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. (ТАСС).

Ялсенчи художествӑллӑ пултарулӑхӑн республикӑри смотрӗ пуҫланчӗ

Мартӑн 15-мӗшӗнче ялсенчи художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен республикӑри смотрӗ пуҫланчӗ. Вӑл мартӑн 24-мӗшӗччен пырать. Смотрӑн малтанхи кунӗнче Ишлей, Хӗрлӗ Чутай тата Чурачӑк районӗсенчи коллективсем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартрӗҫ.

Ишлей районӗнчен смотра йышлӑн хутшӑнчӗҫ. Пултарулӑх коллективӗсенчен Ишлей районӗнчи культура ҫуртӗ ҫумӗнчи хӗрачасен хорӗ (руководителӗ Емелькина) аван юрланине палӑртмалла. Ҫавӑн пекех Мӑналти вулав ҫуртӗ ҫумӗнчи струннӑй оркестрӑн пултарулӑхӗ те уҫӑмлӑн курӑнчӗ. Петров юлташ оркестра пултаруллӑн ертсе пырать. Анчах та оркестр чухӑн. Ана ытларах музыка инструменчӗсемпе пуянлатни кирлӗ. Петров юлташ хӑй кӗслепе «Совет Союзӗн гимнне» питӗ аван выляса пачӗ.

Хӑйсен пултарулӑхӗсене уйрӑмӑн кӑтартакансенчен Кикас юлташ «Фронтри частушкӑсене» юрланине, «Матрос ташши» ташласа панине, Черновӑпа Кикас юлташсем «Гопак» ташши аван ташланине палӑртмалла. Дуброва юлташ хӑй ҫырнӑ «Урнне» ятлӑ сӑвӑллӑ калава вуласа пачӗ. Грезнов баянист «Вуник кӑшӑллӑ пичкине» ятлӑ чӑваш халӑх юррине юрласа панипе тата ытти кӗвӗсене выляннине те ырламалла. Харитинӑпа Васса Трепнезӑсем «Колхоз частушкисене» аван юрласа пачӗҫ.

Ишлей районӗ смотра аван хатӗрленнӗ. Районри культура ҫуртӗн директорӗ Чернова юлташ ку ӗҫе чылай вӑй хунӑ. Анчах район смотра тата лайӑхрах хатӗрленме пултарнӑ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчен смотра питӗ сахаллӑн килнӗ. А. Шинжаев «Когда я на почте служил ямщиком», «Меж крутых бережков» ятлӑ юрӑсене аван юрларӗ. З. Таеров гитарӑпа паха кӗвӗсем каласа пачӗ. Б. Петров «Куплеты водовоза» юрра юрланине, П. Тихонов хӑй ҫырнӑ «Фронтри каҫ» сӑввине вуласа панине лайӑх енӗпе палӑртмалла.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчен смотра сахаллӑн хутшӑнни районри ҫутӗҫ пайӗ ҫак ӗҫ ҫине ҫителӗксӗр ҫаврӑнса пӑхни ҫинчен калать.

Чурачӑк районӗнчен те смотра сахаллӑн килнӗ. Уйрӑмӑн тухса юрлакансенчен Беспалова «Кондуктор Валя» юррине юрласа панине, М. Павлов Шолоховӑн «Они сражались за Родину» роман сыпӑкне вуласа панине палӑртмалла.

Виҫӗ районри коллективсен художествӑллӑ пултарулӑхне кӑтартнипе смотрӑн пӗрремӗш кунӗ вӗҫленчӗ. Смотр малалла пырать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 16-мӗшӗнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, ПОКАРБЕН, ТЕНГЕН, ШОЙШЕН, ВЕСДЕЛЕН, КРАНЦБЕРГ, ШТОБЕКЕН, ФУКСБЕРГ, ЙАРФТТАЛЬ, ФРОЙДЕНТАЛЬ, ЛОУТЕРБАХ, ФРЕНЗЕЛЬСВАЛЬДЕ, ГЕРЦОГСВАЛЬДЕ ялӗсене туртса илнӗ. Мартӑн 15-мӗшӗнче ку районра 600 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

ДАНЦИГ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, ЖУКОВО (ЦУКАУ), ПЕМПАУ, БАНИН, РАМКАУ, ЭСПЕНКРУГ ялӗсене туртса илнӗ. Мартӑн 15-мӗшӗнче ку районра пирӗн ҫарсем 700 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

ШТЕТТИН хули енче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен ОДЕР шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗрринчи плацдармне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, ГРАЙФЕНХАГЕН хулине тата РОЗЕНГАРТЕН, БРЮНКЕН, НОЙ БРЮНКЕН, ВИНТЕРСФЕЛЬДЕ ялӗсене туртса илнӗ.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, нимӗҫсен малтанхи ҫапӑҫусенче пысӑк ҫухатӳсем тӳснӗ танко вӑй чаҫӗсен атакисем самаях вӑйсӑрланнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 15-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 63 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 33 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ВЕНГРИРИ ВЕСПРЕМ ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПӐННИ

Мартӑн 16-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем каллех Венгрири Веспрем чугун ҫул узелне пырса тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, чугун ҫул узелӗнче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Хӗвелтухӑҫ Пруссири тӑшман ҫарӗсен ушкӑнне хупӑрласа илнӗ ӳчка ҫаплах хӗстерсе пынӑ. Тинӗс хӗрринчи анҫӑр ҫӗр ҫинче хӗстерсе лартнӑ нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Ӗнер пирӗн ҫарсем туртса илнӗ Бладиау ялӗнчен хӗвеланӑҫнерехре уйрӑмах хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Бладиау вӑл—шоссе ҫулӗсен узелӗ. Бладиау ялне туртса илнипе совет чаҫӗсем нимӗҫсен фронт тӑрӑх каякан юлашки шоссе ҫулне татнӑ. Тӑшман, хӑйӗн ҫухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илме хӑтланса, темиҫе хутчен те атакӑланӑ, анчах та нимӗнле ҫитӗнӳ те тӑваймаӑн. Совет чаҫӗсем тӑшман атакисене сирсе янӑ та малалла куҫса пырса, лайӑх позицисем туртса илнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем Лаутер шывӗ урлӑ каҫнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт атакаласа, нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Фройденталь ялне туртса илнӗ. Кун каҫиччен тӑшманӑн, вилнисене кӑна шута илсен те, 4.000 салтакпа офицер ытла пӗтнӗ. Нимӗҫсенчен 6 танк, 50 тупӑ, 33 миномет тата 128 пулемет тытса илнӗ.

* * *

Данциг хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫирӗплетнӗ Данцигпа Гдыня районӗн тулашри оборона позицийӗсенче ҫапӑҫнӑ. Ҫав позицире танксене чарма алтнӑ тарӑн канав, темиҫе лини траншея, темӗн чухлӗ дотсемпе дзотсем пулнӑ. Айсӑр участокра нимӗҫсен артиллерипе миномет батарейисем нумай лартса тухнӑ. Оборона сооруженийӗсене пурне те питӗ йышлӑ пралук картисем тата мина хирӗсем хӳтӗлесе тӑнӑ. Данциг хулипе Гдыня хулине хӳтӗлесе тӑракан ялсене уйрӑмах вӑйлӑ тӗреклетнӗ. Совет чаҫӗсем, ҫапӑҫса малалла куҫса пырса, Жуково (Цукау) ялӗн кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ тата ҫурҫӗр хӗррисене пырса тухнӑ. Тӑшманӑн пысӑк гарнизонӗ дотсемпе чул ҫуртсенче ҫирӗпленсе ларнӑ та, вӑйлӑн персе тӑрса, пирӗн чаҫсен ҫулне пӳлсе лартма хӑтланнӑ. Совет пехотинецӗсемпе артиллерисчӗсем тӑшман хирӗҫ тӑракан вырӑнсене пусарса лартнӑ та Жуково (Цукау) ялне туртса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен темиҫе контратакине сирсе янӑ. Нимӗҫсен ҫав атакисене ҫар карапӗсем ҫинчи артиллери персе пулӑшса пынӑ. Пирӗн позицисем умӗнче тӑшманӑн темиҫе ҫӗр вилли выртса юлнӑ. Трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра—5 танк, 7 паровоз, 120 вагон тата ҫар пурлӑхӗн 5 склачӗ.

* * *

Штеттин хули енче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн Одер шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗрринчи плацдармне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем ҫав плацдарма кирек мӗн пулсан та хӑйсен аллинче тытса хӑварма тӑрӑшнӑ. вӗсем унта хӑйсен танкӗсен, артиллерийӗн тата пехотин пысӑк вӑйӗсене пухнӑ. Малтанах хатӗрленӗ укрепленисемпе усӑ курса, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑрать. Хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Одер шывӗ тӑрӑх ҫурҫӗрелле куҫса пыракан совет чаҫӗсем Грайсенхаген хули патне виҫӗ енчен пырса тухнӑ. Тӑшман гарнизонне шыв хӗррине хӗстерсе лартнӑ та аркатса тӑкнӑ. Нимӗҫсен Одер шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗрринчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑракан Грайсенхаген хулине туртса илнӗ чухне пирӗн боецсем хӗҫпӑшал тата ытти вӑрҫӑ хатӗрӗсем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫарсем Альтдамм хулинчен виҫӗ километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Розенгартен ялӗпе шоссе ҫулӗсен узелне туртса илнӗ. 500 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Юлашки вӑхӑтра нимӗҫсен ҫарӗнчен таракан салтаксен хисепӗ ӳсни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Аркатса тӑкнӑ нимӗҫ чаҫӗсемпе подразделенийӗсенчи салтаксем пӗчченшерӗн е пӗчӗк ушкӑнсемпе тыла каяҫҫӗ, вӑрмансенче сулланса ҫӳреҫҫӗ, граждӑнла халӑх тумтирне тӑхӑнаҫҫӗ те ялсенче пытанса пурӑнаҫҫӗ. Нимӗҫсен командованийӗ дезертирсене питӗ хаяррӑн тыткалать. Тыткӑна лекнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, нимӗҫ хулисенче чылайӗшӗнче фронтран тарнисен ушкӑнӗсене ҫакса вӗлернӗ е персе пӑрахнӑ.

Нимӗҫсен 56-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 171-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Людвиг Гайзлер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Кенигсберг хулинче хӑйсен подразделенийӗсене пӑрахса тарнӑ салтаксем питӗ нумай пытанса пурӑнаҫҫӗ. Темиҫе кун каярах унта 80 дезертира персе пӑрахрӗҫ». Нимӗҫсен 337-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 690-мӗш полкри салтаксем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, Данциг хулинче халӑх умӗнче 28 салтака ҫакса вӗлернӗ. Нимӗҫсен 550-мӗш штрафной батальонӗнчен тыткӑна лекнӗ салтаксем Отто Балдер тата Роберт Брюкнер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Пиллау хулинче ҫар влаҫӗсем кашни кун тенӗ пекех салтаксене пере-пере пӑрахаҫҫӗ. Пӗр кун хушшинче 14 салтака персе пӑрахрӗҫ. Унсӑр пуҫне тата портра маяк патӗнче 7 салтакпа пӗр офицера ҫакса вӗлерчӗҫ».

Хӗрлӗ Ҫар енне нимӗҫ ҫарне мобилизациленӗ поляк Тадеуш Коповский куҫнӑ. Вӑл ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нумаях пулмасть эпӗ Штеттин хулинче пултӑм. Хулара тем пысӑкӗш пӗлтерӳсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫав пӗлтерӳсенче ҫапӑҫу хирӗнчен тарнӑ пирки 150 салтакпа офицера персе пӑрахни ҫинчен каланӑ. Унта вӗсен хушамачӗсемпе адресӗсене пӗтӗмӗшпех кӑтартса панӑ».

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ВУНА ÇУЛ ХУШШИНЧЕ

Вăрнар районĕнчи колхозсем 10 çул хушшинче, 1935 çултан пуçласа 1945 çула çитиччен, акăнакан çĕр лаптăкне 74 процент таран ӳстернĕ. Уйрăмăн илсен çурхи тулă акнă çĕр лаптăкĕ 207 процент, çĕрулми лаптăкĕ 572 процент, пахча-çимĕç лаптăкĕ 728 процент, махорка лаптăкĕ 530 процент чухлĕ ӳснĕ. Тырпул тухăçлăхĕ вара 10 çул хушшинче, вăтам шутпа гектартан 10.3 центнертан 14.6 центнера çити ӳснĕ.

ХУРТ-ХĂМĂР ПĂХАКАНСЕН КУРСĔ

Комсомольски районри çĕрĕç пайĕ çумĕнче хурт-хăмăр пăхакансен икĕ эрнелĕх курсĕ ĕçлет. Курсра 20 çын вĕренет. Кунта, теориллĕ ыйтусемсĕр пуçне, практикăллă занятисем те пулса иртеççĕ. Курс çак кунсенчех хăйĕн ĕçне вĕçлет.

22-МĔШ ÇУЛ ТУХАКАН СТЕНА ХАÇАЧĔ

Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз правленийĕпе парторганизаци çумĕнчи «Çĕнтерӳшĕн» стена хаçачĕ 22-мĕш çул тухать. Хаçат редакторĕ пулса чылайранпа ĕнтĕ (Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче пулнине шута илмесен) рядовой колхозник Николай Александрович Матросов ĕçлет. Николай Александрович хăй кăларакан хаçата юратать, редколлеги тавра колхозниксемпе колхозницăсен активне явăçтарма пĕлет. Колхозниксем те хăйсен хаçатне юратаççĕ, ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен тăтăшах çырса тăраççĕ. Хаçат тухнă кун ăна вулама пухăнаççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсем пынă вăхăтра хаçата колхозниксем ытларах пухăнакан вырăна кăсараççĕ.

Матросов юлташа лайăх ĕçленĕшĕн 1937 çулта Мускава, стена хаçат редакторĕсен канашлăвне янă, ăна темиçе хутчен те хаклă парнесемпе тата укçан премиленĕ.

Иртнĕ çулта «Çĕнтерӳшĕн» стена хаçачĕ 40 номер тухнă.

АДВОКАТСЕН ПУÇАРĂВĔ

Йĕпреç районĕнчи Туçа тата Хурамал ялĕсенчи вулав çурчĕсенче, кашни уйăхрах 2-мĕш числасенче, районри адвокатсем колхозниксемпе колхозницăсене тӳлевсĕр юридически пулăшу параççĕ. Вĕсем тĕрлĕ законсем çинчен, уйрăмăнах çар çыннисен çемьисене правительство паракан çăмăллăхсем çинчен ăнлантараççĕ. Ĕççыннисене пулăшас майпа тĕрлĕ ĕçлĕ хутсем çырса параççĕ.

ОБЛИГАЦИСЕМ ТĂРĂХ ТУХНА ПЫСĂК ВЫЛЯВСЕМ

Калининю районĕнчи перекет касси Государство Заемĕсен облигацийĕсем тăрăх 1944 çулта 316.750 тенкĕ, 1945 çулта 137.130 тенкĕ выляв укçисем тӳленĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз счетоводĕ И. Маслянова, «Красный кавалерист» колхоз членĕ Ф. Иванова, Услапари «Броневик» колхоз членĕ С. Петров юлташсем кашниех 500-шер тенкĕ выляса илнĕ.

Красноармейски районри «Красный герой» колхозри В. Романов Военнăй Заемăн облигацийĕпе 1000 тенкĕ, Советски районри Советски ял çынни Военнăй Заемăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕпе 50.000 тенкĕ выляса илнĕ.

ЯЛТИ ПУЛТАРУЛĂХ КРУЖОКĔ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тури Çĕрпӳкассинчи вулав çурчĕн заведующийĕ Романова юлташ ертсе пынипе иртнĕ çулхи кĕркуннерен вара драмкружок лайăх ĕçлеме тытăннă. Кружокра учительсемпе ялти çамрăксем тăраççĕ. Кăçал кружок пурĕ 10 пьеса лартса панă. Юлашки вăхăтра «Ялта», «Çĕрлехи çиçĕм» пьесăсене кӳршĕри ялсенче лартса панă.

Çавăн пекех «Путь социализма» колхозри драмкружок та лайăх ĕçлет. Кружока вулав çурчĕн заведующийĕ И. Илларионов юлташ ертсе пырать.

ЮРĂПА ТАШĂ АНСАМБЛĔН БРИГАДИ КОЛХОЗСЕНЧЕ

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн бригади Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсене тухса кайрĕ. Бригадăна Г. Лебедев композитор ертсе пырать. Бригадăн репертуарĕнче чăваш халăх юррисемпе ташшисем, Совет Союзĕнчи халăхсен юррисемпе ташшисем, чăваш тата вырăс совет композиторĕсен произведенийĕсем пур. Ансамблĕн бригади асăннă районсенче апрелĕн 10-мĕшĕччен пулать, унтан таврăнсан вара пĕтĕмĕшпех республика юбилейне хатĕрленес ĕçе хутшăнать.

Республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕ вĕçленнĕ

Республикăри 10-мĕш шахмат турнирĕн юлашки турĕнче Журавлевпа Студенецкин партийĕ интереслĕ пулнă, мĕншĕн тесен пĕрремĕш вырăна кам тухасси çав партие мĕнле вĕçленнинчен килнĕ. Вăл партире Студенецкий Журавлева çĕнтернĕ. В. Никитин—И. Никитина, А. Никитин—Афанасьева, Коновалов—Безверхние çĕнтернĕ.

Çапла вара, республикăри шахмат турнирĕнче пĕрремĕш вырăна тухса, Чăваш республикин шахмат чемпионĕ ятне пиллĕкмĕш хут ĕнтĕ 1-мĕш категориri шахматист Студенецкий илнĕ, вăл 10 очкоран 9,5 очко выляса илнĕ. Иккĕмĕш вырăна 1-мĕш категориri шахматист В. Никитин йышăннă, унăн—9 очко. Виççĕмĕш вырăна А. Никитин йышăннă, вăл 6,5 очко выляса илнĕ, А. Никитинпа Афанасьев 2-мĕш категориri шахматист ятне илме çителĕклĕ чухлĕ очко выляса илнĕ.

Государствăна аш-какай параççĕ

СОВЕТСКОЕ. Хĕрлĕ Çар фронтра çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тунине ответлесе тата çĕнтерӳ кунне хăвăртрах çывхартас тесе, «За коммунизм», «Новая жизнь», «Новый быт» колхозсем ытти парăмсемпе пĕрлех кăçалхи çулшăн аш-какай памалли плана та пĕтĕмпех тултарнă. Çавăн пекех «Красное Сормово», «Искра», «Прогресс», «Спутник колхозника» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те кăçалхи аш-какай обязательствине парса татнă. Килес çулшăн аванс шучĕпе «Искра» колхоз — 4.22 центнер, «Прогресс» колхоз—4.43 центнер, «Красное Сормово» колхоз 1,62 центнер аш-какай панă.

П. ЭНГЕР.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Ремаген патĕнче, Рейн шывĕ хĕрринчи укреплени районĕнче союзниксен çарĕсем Кельнпа Франкфурт хушшинчи пысăк автострадăран 1.6 километрта кăна тăраççĕ. Тăшман каярах хирĕç тăнине çĕнтерсе, союзниксен çарĕсем çав укреплени урлăшне 10 километр таран, сарлакăшне 118 километр таран аслăлатнă.

Кобленц хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле Мозель шывĕ çинчи укрепление аслăлатса пырса, союзниксен çарĕсем нумай хулапа ял тытса илнĕ. Тăшман вăйлă хирĕç тăман. Союзниксен çав укреплени урлăшĕ халь 10 километра, сарлакăшĕ 14 километра çитет.

Трир хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле союзниксен ытти чăçĕсем нимĕçсен Рейн, Мозель тата Саар шывĕсем хушшинчи виçкĕтеслĕх çине наступлени туса пыраççĕ, 4 километр малалла кайнă. Тăшман вăйлăх хирĕç тăман. Анчах та Саарбургран кăнтăр-хĕвелтухăçнелле вăл пит вăйлă хирĕç тăрать.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Америкăн 3-мĕш армийĕпе пĕрле пыраканскер, çапла пĕлтерет: çав çарăн чăçĕсем Кобленц хулинчен кăнтăртарахри Мозель шывĕ урлă каçса кайнă. Çав шывран çурçĕртерехре нимĕçсен хирĕç тăракан вырăнĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС) Америкăн Европăри стратегиллĕ сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: мартăн 15-мĕшĕнче Америкăн 1.350 бомбардировщикне яхăн Берлин çывăхĕнчи объектсене, çав шутра Берлинран 20 километр çурçĕртерехре ларакан Ораниенбургри пысăк чугун çул депоне тапăннă. Бомбардировщиксене 750 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕн Берлинран 20 километр кăнтăртарахри Зоссен хулинче тăракан генеральнăй штабне атакăланă. Ăна мартăн 15-мĕшĕнче мĕнпур операцисене хутшăннă самолетсенчен çурри яхăн тапăннă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН ÇĔНĔ ЙЫШШИ ТАНКĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС) «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, США çар министрĕ Стимсон мартăн 8-мĕшĕнче пресс-конференцире çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсенче халĕ наступлени тумалли çĕнĕ «Першинг Т—26» йышши танк тунă. Танк çине 90 миллиметрлă тупă лартнă. Çак танк американецсен «Шерман» йышши танкĕнчен чылай йывăртарах, нимĕçсен «Королевский тигр» йышши танкĕнчен çăмăлтарах.

Малалла Стимсон çапла каланă: 1941 çулта артиллери управленийĕ нимĕçсенинчен кая мар йывăр танк тунăччĕ, анчах та вăл çăмăлтарах та маневрсем лайăхрах тума пултаракан танксем тума шутларĕ, тенĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ОСАКА ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ВАШИНГТОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Американецсен бомбардировка тăвакан авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Б—29» йышши 300 яхăн бомбардировщик Осака хулинчи (Япони) çарпа промышленность объекчĕсене тапăннă. Вут хыптаракан бомбăсем 2.000 тонна пăрахнă.

ТОКИО, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутран пуçласа, «Б—29» йышши 90 бомбардировщике яхăн пĕлĕтсем хушшинчен Осака хули çине 3 сехет хушши бомбăсем пăрахса тăнă. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, вут хыпса илнĕ вырăнсене нумайĕшне тепĕр кунне тин сӳнтернĕ.

КĔСКЕН

* Англи авиацийĕ 10 тонна таякан бомбăсем те пăрахать. Çавăн пек бомбăна самолет çине тиеме 6 çын кирлĕ.
* Бельгири депутатсен палати правительствăна хăйне уйрăм полномочисем парасси çинчен калакан законопроекта çирĕплетнĕ.

Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн суйлав умĕнхи пухăвĕ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Хельсинки хулинче Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ суйлав умĕнхи пысăк пуху туса ирттернĕ. 7.000 çын кĕрекен залра халăх тулличех пулнă. Пухура çак çынсем суйлав умĕнхи сăмахсем тухса каланă: финсен паллă писательници Вуолиски, Финляндири коммунистсен партийĕн секретарĕ Песси тата социал-демократсен партийĕн оппозици представителĕ—философи докторĕ Рууту.

Хăйĕн сăмахĕнче Рууту çапла каланă: Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршыва нимĕçсем пусса тăнинчен ирĕке кăларнине пула, финн халăхĕ нумай вăхăт хушшинче пирвайхи хут суйлавсене ирĕклĕн ирттерме пултарать. Финлянди икĕ вăрçăра та поражени тӳснĕ пулин те, Совет Союзĕ унăн 1917 çулта Ленинпа Сталин панă никама пăхăнманлăхне тĕкĕнмерĕ. Ырă кăмăллă пулса, ăна çапăнипех хăварчĕ. Финляндин малашнехи пурнăçĕ мĕнле пуласси нумай енчен хамăртан килет. Пулас суйлавсенче пирĕн халăх уççăнах çакна каласа памалла: Финляндие ертсе пыракан ушкăнсен ĕлĕкхи тĕрĕс мар çар политикине ырлать-и вăл е сивлет-и. Пулас мирĕн ĕçĕ нумай енчен сейма суйланă чухне пирĕн халăх мĕнле позици йышăннинчен килет. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи туслă çыхăнусене çирĕплетес тетĕр пулсан, Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн кандидачĕсемшĕн сасăлăр».

ФИНСЕН «КОММУНИСТИ» ЯТЛА ЖУРНАЛĔН РЕДАКЦИНЕ ТАПĂННИ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапаа Сана» тата «Хельсингин Саномат» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕнчен тенĕ чух çĕрле паллă мар çынсем «Коммунисти» ятлă журнал редакцийĕн çуртне кĕрсе кайнă та картотекăна тата ытти хутсене сапаласа пĕтернĕ, арифмометра, почта тарасине сиенленĕ. Çав çынсем редакци çуртне алăкăн чӳречине ватса кĕнĕ, ытти алăксене отмычкăпа уçнă. Айăплисене полици тупайман.

СОВЕТ СОЮЗĔ ФИНЛЯНДИРЕН ТАРА ИЛНĔ ПОРККАЛА-УДД РАЙОНĔН ЧИККИНЕ ПАЛАРТАС ĔÇ ВĔÇЛЕННИ ÇИНЧЕН

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири çинчен йышăннă Килĕшӳ тăрăх, Совет Союзĕпе Финляндин пĕрлешӳллĕ миссийĕ Совет Союзĕ Финляндирен тара илнĕ Порккала-Удд районĕн чиккине палăртас ĕçе вĕçленĕ. Пĕрлешӳллĕ комисси ва районăн çĕр çинчипе тинĕс çинчи чиккисене чикĕ паллисемпе палăртса тухнă. Пурĕ 111 чикĕ палли лартнă, тара илнĕ Порккала-Удд районĕн чикки мĕнле иртнине вырăнсемпе пынине протокол çине çырса хунă, протокол çумне тивĕçлĕ приложенисем тата картăсем хушса хунă.

Союзниксен Финляндири Контроль комиссийĕн политикăллă советникĕ П. Д. Орлов посланник тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ К. Энкель господин кăçалхи мартăн 14-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне çырусем янă. Çав çырусенче Совет Союзĕн Правительстви тата Финлянди Правительстви 1944 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче Хельсинки хулинче пĕрлешӳллĕ комисси алă пуснă протокола (ун çумне хушса хунисемпе тата картăсемпе пĕрле) çирĕплетнĕ, тесе каланă.

БОЛГАРИРИ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ФРОНТ КОМИТЕЧĔН КОНГРЕСĔН РЕШЕНИЙĔ

СОФИЯ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Отечественнăй фронт комитечĕн конгресĕ, мартăн 10-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче ĕçленĕскер, правительство ĕçĕ çинчен тата Отечественнăй фронт комитечĕсен ĕçĕсем çинчен резолюци йышăннă.

Конгресс правительствăн тулти шалти политикине ырланă, правительствăна шанса ăна çинчен каланă тата халĕ тытса пыракан пĕртен-пĕр тĕрĕс политикăна пĕр иккĕленмесĕр малалла та çирĕп тытса пыма сĕннĕ.

Отечественнăй фронтăн вырăнти комитечĕсемпе наци комитечĕн ĕçĕсем пирки йышăннă резолюцире Отечественнăй фронтăн тата унăн нациллĕ комитечĕн политикăллă тĕп çулйĕрне тата унăн ĕçĕсене ырланă. Болгарие нимĕç сăнчăрĕсенчен хăтарас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем пĕлтерĕшлĕ ĕçе татса панине палăртнă. Резолюцире Болгари халăхĕ вырăс халăхне тата Хĕрлĕ Çара пĕтĕм чун-чĕререн тав туни çинчен каланă.

ВЕНГРИРЕ НИКАМА ПĂХĂНМАНЛĂХ КУННЕ УЯВЛАНИ

ДЕБРЕЦЕН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçер Венгрин ирĕке кăларнă пĕтĕм çĕрĕнче наци пысăк уявне уявласа ирттерчĕ. Венгри халăхĕн нимĕç пусмăрĕнчен хăтăласшăн пынă хăватлă юхăмĕ лартнă Венгри правительстви 1848 çулта çак куна мартăн 15-мĕшĕнче—Венгри никама пăхăнман çĕршыв пулса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Дебреценра пулса иртнĕ митингра шалти ĕçсен министрĕ тата хресченсен нациллĕ партийĕн руководителĕ Эрдей Ференц пысăк сăмах тухса каланă.

— Венгри халăхĕ габсбургсен реакцине хирĕç çĕкленнĕренпе вара,—тенĕ вăл,—часах 100 çул çитет. Çавăн хыççăн вара хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн Венгри халăхĕ çĕнĕрен те çĕнĕрен кĕрешĕве çĕкленнĕ, анчах кашнинчех ăна çĕмĕрсе тăкнă. Халĕ ĕнтĕ эпир хамăр ялавсене çĕнĕрен çĕклеме май паракан историллĕ тапхăр патне çитрĕмĕр.

Хĕрлĕ Çар Венгри халăхне ирĕклĕн те никама пăхăнмасăр пурăнма çул уçса пачĕ. 1848 çулта пуçланă ĕçе эпир вĕçлесе çитермелле. Ăна вĕçлеме пултаратпăр та. Эпир хресченсене çĕр валеççе парăпăр, фашистла реакцие пĕтерсе хурăпăр. Çав реакци урăх нихçан та пуçне çĕклемелле ан пултăр. Çапла тунипе эпир ирĕклĕхе юратакан тĕнчери халăхсем хушшинче хамăра тивĕçлĕ вырăна кĕрешсе илĕпĕр. Халăх пирĕнтен çакна кĕтет, çак ĕçре çурма çулта чарăнмасăр малалла кайма пирĕн вăйсем çитĕ.

Министр сăмах каланă вăхăтра халăх темиçе хут та алă çупнă. «Çĕре—хресченсене!», «Фашистла преступниксене вилĕм!» тенĕ сасăсем илтĕннĕ.

НЬЮ-ЙОРКРА ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПĔРЛĔХЕ ХӲТĔЛЕС ТĔЛĔШПЕ МИТИНГ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Медиссон-сквер Гарденре, производствăллă профсоюзсен конгресĕ (КПП) пуçарса янипе, пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхе хӳтĕлес шутпа митинг пулса иртнĕ. Митингра 15.000 çын ытла пулнă. Митинга пухăннисем профсоюзсен Лондонра пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн решенийĕсене тата виçĕ державăн Крымри конференцийĕн решенийĕсене ырланă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: СССР-ĕн США-ри послĕ Громыко юлташ, производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей, профсоюзсен Лондонра пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче пулнă КПП делегачĕсем, вĕсем хушшинче автомобиль промышленноçĕн рабочийĕсен профсоюзĕн председателĕ Томас, çĕвĕçсен профсоюзĕн председателĕ Хиллмэн, моряксен профсоюзĕн председателĕ Каррэн.

ЛАТИНЛА АМЕРИКĂРИ ĔÇÇЫННИСЕН КОНФЕДЕРАЦИЙĔ АМЕРИКА ÇĔРШЫВĔСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ АРГЕНТИНА ПИРКИ ЙЫШĂННА РЕЗОЛЮЦИЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Мексико хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Латинла Америкăри ĕççыннисен конфедерацийĕ хăйĕн председательне Ломбардо Толеданона Америка çĕршывĕсен Мексико хулинче пулса иртнĕ конференцийĕнче Аргентинăна çав конференцире тунă килĕшӳсене йышăнма сĕннине хирĕç протест пама хушнă.

Ломбардо Толедано каланă тăрăх, çав сĕнӳ вăл Пĕрлешӳллĕ Нацисен вăрçă тĕллевĕсене хирĕç пырать, çавăн пекех Тегеранра тата Крымра виçĕ держава йышăннă программăна хирĕç пырать. Испанипе Португалири фашистла режимсене хавхалантарать тата Латинла Америкăри реакциллĕ элементсене пулăшать.

Тĕнчери лару-тăру

Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăкăн шăтăкне шалтан шалалла ăнăçлăн кĕрсе пырать, хăйĕн çулĕ çинчи хăватлă сооруженисене аркатса-аркатса тăкать (гитлерла пропаганда çав сооруженисене никам та пырса тĕкĕнеймест, тесе мухтанатчĕ). Совет çарĕсем, Германин Берлин патне пымалли çулсем çинчи оборонин чи паха узелне—Кистжинь (Кюстрин) крепоçне туртса илчĕç. Балтика тинĕс хĕрринче çĕнĕ «хурансем» туса хучĕç. Çав «хурансенче» Германин темиçе вуншар пин салтакĕпе офицерне хупăрласа илнĕ. Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн союзниксен çарĕсем «Зигфрид линийĕ» урлă ăнăçлăн каçаççĕ, темиçе тĕлте Рейн шывĕ урлă каçса кайнă, унăн хĕвелтухăç енчи çыранĕнче темиçе тĕлте укрепленисем туса хунă. Хĕвеланăç Германири чи пысăк хулана—Кельн хулине—союзниксен çарĕсем туртса илнĕ.

Сталин юлташ хăйĕн çак çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче панă историллĕ приказĕнче çапла каларĕ: «Нимĕçсене татăклăнах çĕнтересси çывăх ĕнтĕ», терĕ. Анчах та Верховный Главнокомандующи, тăшмана çителĕксĕр хак парассинчен сыхлантарса, çапла каларĕ: вилес патне çитнĕ тăшман, хăйне пысăк катастрофа парассинчен хăтăлса юлас тесе, чи хаяр та ирсĕр майсемпе кĕрешет, малашне те çапла кĕрешĕ, терĕ. Сталин юлташ сыхлăха ӳстерме тата тăшмана вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапма чĕнчĕ.

Халăхсен ĕçсем Сталин юлташ асăрхаттарни мĕн тери кирлĕ те вăхăтлă пулнине кăтартса параççĕ. Гитлерла тискер кайăк хăй пĕтес кун çывхарса килнине туйса, халех вăрттăн кĕрешме хатĕрленет. Каярахпа çурăмран ирсĕррĕн пырса çапас тесе, вăл хăйĕн кадрĕсене тата пурлăхĕсене сыхласа хăварасшăн.

Ют çĕршывсенчи хаçатсенче пичетленекен пĕлтерӳсем çакна кăтартаççĕ: гитлерла вăрă-хурахсен руководителĕсем вăрттăн кĕрешмелли плансене таçтанах хатĕрлеме пуçланă. Вĕсем тепĕр хут вăрçса сиеле тухма шутлаççĕ. Нимĕçсем Сталинград патĕнче поражени тӳснĕ хыççăнах нимĕç генералĕ Штюльпнагель хăйĕн докладĕнче тепĕр хут вăрçа сиеле тухас шухăша кăларса тăратнă. Çав шухăша вăл кадрсене тата Германи промышленноçне упраса хăварса пурнăçа кĕртме сĕннĕ.

Англири радиообозреватель Аллан Бел çапла калать: гитлеровецсем вăрттăн кĕрешме Германипе Австри чиккинчи Берхтесгаден таврашĕнчи районра хатĕрленеççĕ. Унта хĕçпăшал, боеприпас, апат-çимĕç склачĕсем тăваççĕ, тусенчи шăтăксенче чылай çын кĕмелĕх хӳтлĕхсем тăваççĕ. Фашистсен вăрттăн ĕçлекен организацине тума сбер-палача Гиммлера хушнă. Ют çĕршывсен хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Гиммлер халь тăвакан террорла бандăсен руководителĕсем пулма эсэсовецсен офицерĕсене уйăрса хунă та ĕнтĕ. Çак тĕлĕшпе Германири радио союзниксен çарĕсен тылĕнче кĕрешме «гитлерла çамрăксенчен» бандăсем туни çинчен пĕлтерни питĕ кăтартуллă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах гитлеровецсем нейтральнăй çĕршывсене капиталсемпе хаклă япаласем куçараççĕ. Швейцарире, Испанире тата Аргентинăра ют çынсем гитлерла пуçлăхсен укçисене вырнаçтараççĕ. Нумаях пулмасть Англири хаçатсем çапла кăтартса пачĕç: союзлă правительствăсем гитлеровецсене хăйсем çаратса пухнă пурлăха нейтральнăй çĕршывсенче пытарма парас мар тесе йышăннă май, Испанире Германи предприятийĕсем сасартăк «панкрута тухма» пуçланă. Вĕсен хуçисем çинчен «тӳлеме пултарайман парăмçăсем» тесе пĕлтереççĕ те вĕсен предприятийĕсене торги туса сутаççĕ, çав предприятисене вара испанецсем йӳнĕ хакпа илеççĕ. Çапла вара Германи предприятийĕсем «хăйсен хуçисене улăштараççĕ». «Йоркшир пост» хаçат çапла пĕлтерет: хăйсен промышленноçне упраса хăварас тесе, нимĕçсем халь урăхла та хăтланаççĕ. Сăмах кунта «капиталсене ют çĕршывсене куçарни» çинчен пырать. Вĕсене патентсене Германирен Швецие тата пăртак Швейцарие те куçарнă пек туса куçараççĕ», тет. Çав хаçат каланă тăрăх, капиталсене çавăн пек куçарасси халь питĕ сарăлнă. Хаçат çапла асăрхаттарать: Германи «çав патентсемпе усă курса, ытти çĕршывсенчи тĕп промышленноçсене тата стратегиллĕ материалсем тăвассине контроллеме пуçлама часах мелĕ-сăлтав тупма пултарĕ», тет.

Крымри конференцин решенийĕсем тăрăх тăвакан Репараци комиссийĕ (вăл Мускавра ĕçлесе тăмалла), паллах ĕнтĕ, нимĕçсем хăйсен капиталĕсене пытарма, нейтральнăй çĕршывсене куçарма хăтланнисене пурне те шута илĕ.

* * *

Крымри конференци фашистсен хӳрешкисене пур çĕрте те пĕтерсе тăкас задача лартрĕ. Анчах пытаннă тăшманпа пур çĕрте те çителĕклĕ таран активлăн кĕрешмеççĕ-ха. Итали çак тĕлĕшпе начар пример кăтартса парать. Италире юлашки вăхăтра фашистсем иртĕнсе кайсах ĕçлеме пуçланă. Вĕсен активлăхĕ çав тери ӳссе кайнă: фашистла çар разведкин пуçлăхĕ Роатта генерал, суда лекнĕскер, влаçсен куçĕ умĕнчех госпитальрен тарнă; ăна унта сывлăхне сыватма «ырă кăмăллă» судьясем янă пулнă. Роатта генерал вăл террорла нумай ĕçсен организаторĕ тата çав ĕçсене хавхалантарса тăнă фашистсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл фашистсене хирĕç кĕрешнĕ пĕртăвансене Росселисене вĕлернĕ. вăл—албанецсен чи усал тăшманĕ. вăл Югослави халăхне хĕсĕрленĕ, темиçе пин партизана асаплантарса вĕлернĕ. Кĕске вăхăт хушши суд тунă хыççăн сакса вĕлерес вырăнне Роаттăна халь ирĕке тухса тарма май панă. Çав пуç касаканăн айăпне палăртмашкăн судьясемпе прокурора темиçе уйăх кирлĕ пулнă. Анчах ун айăпне палăртма таçта аякка каймалла пулман: Югослави правительстви Итали правительствинчен Роатта генерала Югославие яма ыйтнă пулнă, ăна хăйĕн юнлă ĕçĕсене пурте лайăх пĕлсе тăракан çĕршывра суд тăвасшăн пулнă. Анчах çапла тăвас вырăнне Роатта генерала тарма май панă. Ăна халь те тупайман-ха. Суд ăна хăйсĕрех «ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупмалла» приговор йышăннă.

Фашистсем халь саванаççĕ. Вĕсем Римра отрядсем те тăваççĕ ĕнтĕ. Çапла, унта нумаях пулмасть вăрттăн ĕçлекен «фашистла республиканецсен партийĕн» 35 членне тытса хупнă. Вĕсем патĕнче хĕçпăшал, фашистсен мундирĕсене, хаçат хучĕ чылай тупнă. Фашистсем ытла та иртĕнсе кайнă, вĕсем журнал та кăларса тăнă. Италири хаçатсем каланă тăрăх, февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче Рима Муссолини ятарласа янă Брандимарта генерал-лейтенант («чернорубашечниксен милицийĕн» генерал-лейтенанчĕ текенскер) пынă. Вăл фашистсен вăрттăн ĕçлекен организацине тĕрĕслесе тухса кăтартусем парса хăварнă. Итали столицинчи ĕççыннисем, фашистсем çав тери активлăн ĕçленипе тата çав тери пысăк вăрçă преступникĕ тарнипе тарăхса, демонстраци тунă. Çав демонстрацие 50.000 çын ытла хутшăннă. Анчах та карабинерсем (жандармсем) вĕсене пăшалсемпе пенĕ.

Çаксене хирĕç демократиллĕ партисемпе организацисем питĕ хытă протестленĕ. Бономи правительствин малашнехи кун-çулĕ çав партисем фашистсене хирĕç шанчăклă та çирĕп мерăсем йышăнма ыйтнине пурнăçа кĕртме пултарнинчен нумай килет.

* * *

Кăçалхи мартăн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче Румыни Премьер-Министрĕ Петре Гроза тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Трансильвани пирки пĕр-пĕрин патне çырусем янă. Румыни Правительстви Совет Союзĕн Правительствинчен Çурçĕр Трансильванире Румыни администрацине туса хума ыйтнă.

Çакă паллă: Хĕрлĕ Çар нимĕçсемпе венгерсен çарĕсене Çурçĕр Трансильванирен хăваласа кăларнă. Анчах та унта фашистла нимĕç агентури аркатас тата сăтарла ĕçсем тăвас ĕçсене организацилеме пуçланă. «Маниу ячĕпе кĕрешекен добровольцесем» текен ушкăнăн отрячĕсем пуринчен ытла [illegible] фашистла железногвардеецсенчен тăраканскерсем. Венгер халăхне пыра-пыра тапанна çав вăрă-хурахсем Хĕрлĕ Çар çарĕсен тылĕнче провокациллĕ ĕçсем те тунă. Румынин ĕлĕкхи правительстви Çурçĕр Трансильванире йĕрке тăвас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман, çавăнпа Совет Главнокомандованийĕ ун чухне Трансильванине тытса тăрас ĕçе Румыни влаçĕсен аллине пама пултарайман.

Румынин çĕнĕ правительстви халĕ çапла шантарса каларĕ: Трансильвани çĕрĕнче эпир йĕркелĕхпе лăпкăлăх тăвас ответлăха хамăр çине илетпĕр тата фронт валли ĕçлесе тăракан мĕнпур вырăнти учреждени сене тĕрĕс ĕçлеттерсе тăма пултаратпăр, терĕ. Совет Правительстви вара, çавна шута илсе, Румыни Правительстви ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшрĕ. Халĕ Румынире пур çĕрте те пулса иртекен митингсенче Румыни халăхĕ çав тери савăнать, хăйне шанса кăмăл тунăшăн Совет Союзĕпе Сталин юлташа хĕрӳллĕн тав тăвать. Румыни Премьер-Министрĕ Петре Гроза хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Ирĕклĕ демократиллĕ Румыни хăйĕн çĕрĕ çинче пурăнакан мĕнпур халăхсемшĕн тăван çĕршыв пулса тăтăр тесе тăрăшатпăр эпир», тенĕ. Трансильванине Румыни халăхĕн аллине пани Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи туслă çыхăнăва çирĕплетме пулăшасси паллах.

* * *

Ваттисем авал çапла каланă: Юпитер кама наказани парас тет, çавна вăл ăсран ярать, тенĕ. Çапла калани Испани фашисчĕсем тĕлĕшпе питĕ тĕрĕс. Испанири фашистсем, Гитлера унăн мĕнпур авантюрăллă ĕçĕнче пулăшса тăнăскерсем, Совет Союзĕпе Германи фронтне «Кăвак дивизи» тенĕ бандăна ярса «Европăна ăлса хăваратпăр», тесе мухтаннăскерсем, халь Сан-Франциско хулинче пухăнмалли конференцие кайма хапсăнаççĕ. Вĕсем хăйсене вăрçă хыççăнхи тĕнчене йĕркелеме ирĕк парĕ, тесе шутлаççĕ. Испанири фашистсем калама çук намăссăрланса кайнă: вĕсем «пĕтĕм тĕнчери йĕрке никĕсне хывас ĕçе» хутшăнма Испанин «историллĕ заслугисем пур» тесе калаççĕ. Фашистсен «Эль-Эспаньоль» хаçачĕ çак кунсенче шап çавăн пек ыйту лартнă.

Испанири фашистсем çавăн пек хăтланни никама та улталаймĕ.

Л. ЯКОВЛЕВ

Театр

„Сенкер двойка"

Чылай хушă çĕнĕ спектакльсем кăтартмасăр пурăннă хыççăн, Чăвашсен Академиллĕ театрĕнче премьера пулчĕ — мартăн 16-мĕшĕпе 17-мĕш кунĕсенче Шупашкар ĕççыннисем И. С. Максимов-Кошкинскин «Сенкер двойка» ятлă пьесине сцена çинче курчĕç.

Юлашки вăхăтра чăваш драматургĕсем хушшинче творчествăллă çĕкленӳ, театр валли драмăллă çĕнĕ произведенисем пама тăрăшса ĕçлени палăрчĕ. Умлăн-хыçлăнах эпир Арк. Еçхĕлĕн, П. Н. Осиповăн тата ыттисен пьесисене вуларăмăр. Максимов-Кошкинскин пьеси те çав шутах кĕрет.

Эпир кунта «Сенкер двойкăн» литературăллă пахалăхĕсем çинчен мар, вăл пьесăран мĕнле спектакль пулса тухни çинчен каласшăн.

Ку спектаклĕн тĕп пахалăхĕ, унăн хакĕ—вăл массăсене кирлĕ воспитани паракан, Тăван çĕршыва, хамăрăн геройсене юратма, çав вăхăтрах ирсĕр тăшмансене — нимĕç захватчикĕсене чĕререн курайми пулма вĕрентекен, вĕсене хирĕç тата хытăрах кĕрешме чĕнекен спектакль пулни.

Сцена çинче—пĕтĕм совет халăхĕ юратакан сталинла соколсем, пирĕн геройла летчиксем. Куракансем умĕнче — вĕсен паттăр ĕçĕсем, вĕсен кăмăлĕсем, ĕмĕчĕсем, савăнăçĕсемпе хуйхисем, пĕр сăмахпа каласан—вĕсен пĕтĕм характерĕ. Спектакль пуçламăшĕнчех вĕсене çитĕнтерсех куракансем сцена çинчи совет геройĕсемпе пĕр пурнăçпа пурăнаççĕ. Пьесăри тĕп герой—капитан Фролов (сăмах майĕн каласан — залри çынсем ăна курсанах чăваш халăхĕн пĕр паттăртан та паттăр ывăлне аса илеççĕ). Çав капитан Фролов совет аэродромĕ çине вĕçсе пынă нимĕçсен разведчикне çапса антарать-и, фашистсен шпионне тытать-и, тăшман вăхăтлăха йышăннă территори çине ирĕксĕрех ларма пулнă совет летчикĕсем хăйсен пултарулăхне пула çăлăнмалли май тупаççĕ-и, — çаксем пурте куракансене çав тери хавхалантараççĕ, куракансен туйăмĕсем геройсен туйăмĕсемпе пĕтĕçсе, пĕр пулса тăраççĕ. Е тата нимĕç салтакĕсем нимĕн айăпсăр вырăс пионеркине тискеррĕн вĕлерсе пăрахсан, «вырăс юнне юхтармасăр апат çиме ларайман» нимĕç полковникĕ совет хĕрне наркăмăш парсан, нимĕçсен штабне хăйĕн хĕрĕ çинчен ыйтса пĕлме пынă ватă карчăка тулалла кăларса пăрахсан, куракан чĕринче хаяр тарăху капланса хăпарать, тăшмансене вăл тем тума та хатĕр. Ахальтен мар, совет летчикĕсем нимĕç офицерне тыткăна илсен, совет хĕрĕ нимĕçсен полковникне персе пăрахсан, пĕтĕм зал алă çупать.

Спектакльре чăн-чăн совет патриочĕсене кăтартнă. Куракан вĕсене чунтан-вартан юратать. Кунпа пĕрлех, спектакльре этем сăн-сăпатне çухатнă, тискер кайăкла, сыхăненле нимĕçсене кăтартнă. Залри халăх вĕсене пĕтĕм чĕререн кураймасть. Çавăн пирки спектакль ăнăçлăн иртет. Çакăнта, каллех калатпăр, унăн тĕп пахалăхĕ, унăн усси.

Спектакль ăнăçлăхĕ нумай енчен артистсен ĕçĕнчен, вĕсен пултарулăхĕнчен, тĕрĕс те ĕнентерӳллĕ образсем тума пĕлнинчен килет.

Чăн малтан, кунта капитан Фролов рольне выляакан ЧАССР тава тивĕçлĕ артистне И. Молодова, Бутенко рольĕнчи ЧАССР халăх артистне Б. Алексеева тата Милостивенко рольĕнчи ЧАССР тава тивĕçлĕ артистне Л. Семенова паллă тумалла. Вĕсем спектакльре тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ, хăйсен рольĕсене тивĕçлипе тĕплĕн ăнланса илсе пит те ĕнентерӳллĕ, çавăнпа та юратмалла образсем тунă. Хĕрарăм рольĕсене выляакансенчен О. Ырзем (карчăк), Петрова (Захаровна), Долгова (Дуня), Кириллова (Фрося) асра юлаççĕ. Нимĕçсен штабне вăрттăн ĕçлеме кĕнĕ совет çыннисен рольĕсене вылясси уйрăмах йывăр, мĕншĕн тесен кĕске вăхăтрах темиçе тĕрлĕ образа кĕрес пулать, анчах та Тани-Юн (Иванова), А. Васильева (графиня), А. Ургалкин (Камский) артистсен вăйĕн çителĕклĕ художествăллă пусăмра тăрать.

Нимĕçсен рольĕсене выляакансенчен уйрăмах Е. Никитин (гестаповец Вегер) аван вылять. Унсăр пуçне Г. Фадеев (бургомистр), Кузьмин (фон Шрек), Дмитриев (Рихтер) самаях ĕнентерӳллĕ образсем тунă, анчах та вĕсен ку рольсенче малашне те ĕçлеме кирли палăрать-ха.

Юлашкинчен режиссер ĕçĕ çинчен каласа хăвармалла.

Спектакле ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Н. С. Айзман лартнă. Ку спектакльре вăл хăйĕн режиссер пултарулăхне çителĕклĕ кăтартса панă. Пьесăн малтанхи вариантне чылай çĕрте улăштарни, сыпăксене урăхла монтаж туни ĕçе усă кӳнĕ çеç темелле. Айзман кăтартса пынипе артистсем те нумай ĕçлени курăнать.

Пĕтĕмĕшпе илсен, «Сенкер двойка» спектакль—пĕтĕм чăваш труппин ăнăçлă ĕçĕ.

Леонид АГАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ Хусанти сасăлă кино механикĕсен курсне вĕренме ярать. Курсра 4 уйăх вĕренмелле. Вĕрентме апрелĕн 5-мĕшĕнче пуçлаççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле. г. Чебоксары. Звуковой кинотеатр. отдел кадров управления кинофикации.
3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—5., заместителĕн — 0—23. секретарĕн — 4—26. парти пурнăç пайĕн 3—97. промышленность пайĕн — 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000

НТ 00293.